## **Уçланкăри палан**

Уçланкăри палан
Шап-шурă çурăлсан
Эпир сăмах татсаччĕ санпалан.
Кĕрхи кунсем çитсен,
Паланăмăр пиçсен
Эс таврăнма пулсаччĕ аякран.

Сана ăсатсанах
Тăм тиврĕ палана,
Шап-шур чечекĕ ӳкрĕ çĕр çине.
Çавна эс пĕлтĕн-ши,
Çавна эс сисрĕн-ши, –
Тăван яла килмерĕн кĕркунне.

Мана курсан ялан
Пуçне усать палан, –
Туять пуль эпĕ саншăн çуннине.
Ан ман, савни, ан ман,
Халь хĕп-хĕрлех палан,
Пире кĕтсех упрать вăл çырлине.

*Сементер, Ю. Уçланкăри палан :[сăвă] / Ю. Сементер // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 437.*